Е. Д. Тимофеева




# ҪУЛПУҪӖ

2-МӖШ ХУТ ҪАПАНАТ.



ШУПАШКАР

Раççей Фетератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респуплĕкĕ

*Е. Д. Тимофеева*

# ÇУЛПУÇĔ

Ђăваш çыруне вĕренмелли кĕнеке

2-мĕш хут çапăнат̆.



ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

ШУПАШКАР ⊡ 1924

Чувашоблит № 354. Печ. 10.000 экз.

г. Чебоксары, Типография Чувашиздата













































У



УА





—





—



У —



уа уа —



Ан



На



Ну



Ана





ан ___



на ___



ана ___ ___

















Ах



Ух



ах —





ух ух —























Хур Хура хуран



ура ___



хур ___ ___



хура хуран ___

Аа Уу Нн Хх Рр

*Аа Уу Нн Хх Рр*






















Хула                    Ала



хулана —



ала —



ула



—

Хула—*Хула*; Ала—*Ала*; Л *Л*.





Хусан Суха



суха ___



сухан ___



Хусана ___

Суха—*Суха*; Хусан—*Хусан* Сс *Сс*
































лаша

Хура лаша



Ула лаша сухара.

Сар лаша хулара

---

Лаша Ш ш *Ш ш*

**Хура ана**
**Шур суха**
**Ула лаша**
**Сухара**
**Ан лар, Анна,**
**Сухала**

*Хура ана.*
*Шур суха*
*Ула лаша*
*Сухара*
*Ан лар Анна,*
*Сухала*



ыраш.





сысна

хыр



ыраш —

Шур сысна ыраш —

**Ыраш** *ыраш,* **Сысна** *Сысна* Ы ы *ы, ы*




















хам



улма



урам



арман

Анна урама ____

Анна армана ____



улма ____



хам, хам ____

| | |
|---|---|
| **Анна, сана ҫалам** | *Анна, сана ҫалам* |
| **Мана улма** | *Мана улма* |

Урам—Мм *Мм*













































турат



Тарас



тымар

Тарас  ___

Тарас турат ___



тымар ___

---

Турат—Т т *Т т*




алӑ шӑна

Наум  ___ шӑна ларнӑ.

Наум ӑна ___

Шӑна шур хут ___ ларнӑ.



Вв

*Вв*



вӑлта шыв

Тарас вӑлта ___

Тарас  тытма ___

Тарас унта вут хунӑ.

Вӑл хуран ___

# П п

*П п*





упа                                        пулă

Павăл вăрмана палан татма ___

Павăл унта упа ___

Павăл упаран пытаннă.

Аппа, сана салма. Мана улма пар̧.

Тарас пулă тытнă. Аппа вăл пулла ___

# К к

*К к*





рак                                        кушак

Рак шывра ___

Ăна курак курнă.

Курак ăна тытнă.

Павӑл: кӑс! кӑс! ___

Кушак: мӑрр, мӑрр! ___

Варук алӑка: шак! шак! тунӑ.

Машук: кам унта? ___



Ии

*Ии*



**Иван** шӑши

Иван ___ вир курма ___

Унта вӑл шӑши курнӑ.

Шӑши шӑтӑка тарса ___

Кушак ним хус-калмасӑр выртнӑ.

Шӑши ӑна кура савӑнса ларнӑ.

Кушак тӑнӑ та ӑна тытнӑ.

*Кушак ним хус-калмасӑр выртнӑ.*

*Шӑши ӑна кура савӑнса ларнӑ.*

*Кушак тӑнӑ та, ӑна тытнӑ.*

# Ее *Ее*







витре

инке

Ентри

Ентри вăрмана хыр касма __

Инке киле  тума __

Вăл витрепе шыв ăсса __

Атте пасара  сутма__

Анне хире сурăх шырама __







çарăк

çурла

çава

Çтаппан урине кив çăпата сырнă.
Вăл çавапа утă çулма ___
Варук çурла ___
Вăл урпа вырнă
Тарас çарăк ___

## Çурла, *çурла* Ç *ç*



УÇĂП вăрмана ___

Унпа  пынă.

Уçăп  курнă.

Вăл  вăс! вăс! ___





ĕне сĕлĕ кĕлте

Хĕрлĕ ĕне сĕлĕ ăшне кĕнĕ.
Вăл сĕлĕ кĕлтине салатнă
Епĕ ăна хăваларăм.



ҭăрăш



КĂВАКАРҬĂН

Кăвакарҭансем арман умĕнҭе тулă ҫинĕ. Вĕсене ҭана курнă. Ҭанан та тулă — килнĕ. Вăл кăвакарҭăнсем патне шуралса пынă. Лешшем кăна сассинҭен палланă та, хăваласа —.

---

Кăвакарҭăн — Ҭ ҭ *Т, т*

# Йй *Йй*

## Кайӑк.



Пӗр кайӑк турат ҫинҙе йурласа ларнӑ. Ун патне тилӗ пынӑ. Вӑл кайӑка: кунта ан, кайӑк! тесе ҙӗннӗ. Кайӑкӗ: ай, ай, ай! тенӗ те, вӗҫҫе кайнӑ. Тилӗ хӑй ҫулӗпе йуртнӑ.

## Йакурпа кӑсийа.



Йакур кӑсийа тытнӑ. Вӑл ӑна клеткӑна хупнӑ. Хӑй ун патне пынӑ та: кӑсийа, мӗншӗн есӗ йурламастӑн? тенӗ. Лешӗ: есӗ мана ирӗке кӑларсан, кулленех йурлӑттӑм, тенӗ.

Куккук сасси ӑҫта илтӗнет?

Хура вӑрман варринҙе

Лутра йуман тӑрринҙе.

*Куккук сасси ӑҫта илтӗнет?*

*Хура вӑрман варринҙе*

*Лутра йуман тӑрринҙе.*

# Ӳ ӳ—*Ӳ ӳ*

## Пӳрт.

Аҫасем хăма татăкĕнҫен пӳрт тунă. Пӳрҫĕн алăкĕ те, ҫӳреҫисем те пулнă. Шала вĕсем сĕтелне-сакне те туса лартнă. Хăйсем хуҫи пулса, ҫĕннĕ хăнисене кĕтсе ларнă.



## Йурă.



Касрăм, касрăм пĕрене,
Турăм лартрăм шурă пӳрт.
Ҫиҫ ҫӳреҫе кастартăм,
Пĕри тухрĕ хăйпăнса.
Хăйпăк виттĕр пăхрăм та,
Путек сурăх сиккелет.

## Кушак.

Кушак пӳрт тăррине улăхрĕ. Вăл урисене хутласа выртрĕ те ҫывăрса кайрĕ. Ҫерҫи вĕҫҫе пыҫĕ те ун патнех ларҫĕ. Ан лар унта, ҫерҫи, темĕн курăн: кушаксем вĕсем пит ҫейе.

**ПĔЛТЕРНИ:** Урайне ҫӳпĕлеме, сурма йурамасть. Урай шăлнă ҫух, шăпăра нӳретес пулать.

## Автан.



Пирĕн автан хура урала, хĕрлĕ çĕлĕклĕ, куçĕсем сиксе тухас пек, сăмси кукăр. Пĕрре епĕ ун патĕнђен иртсе пынă ђух, вăл хăрах урине çӳлелле çĕклерĕ те, çăварне карса пăрахрĕ. Унтан ки-ки-ри-рик! тесе, кăшкăрса йађĕ.



## Ђи-ђи кăсийа.

Ђи-ђи кăсийа,
Ăçта кайан, кăсийа?
— Кантăр вăри çимешкĕн.
Йе хуçи курсассăн?
— Тарăп хăпарăп хыр тăрнс.
Йе хырăму выççассăн?
— Хыр йĕкелли çийĕпçке.
Йе пырна ларсассăн?
— Ђавăп, ђавăп кăларăп.
Йе йуну тухсассăн?

— Шыва кӗрӗп ђўкенӗп.
Йе тӗкў шӑнсассӑн?
— Вут хурӑп та ӑшӑнӑп.
Йе вутту вӑйлансан?
— Тапӑп, тапӑп сўнтерӗп.
Йе уру хуҫӑлсан?
— Пӑхӑрҫа кайӑп сыптарӑп.
Йе пӑхӑрҫи ҫук пулсан?
— Улатӑра кайӑп сыптарӑп.
Йе Улатӑр ҫук пулсан?
— Ђӗмпӗре кайӑп сыптарӑп.
Йе Ђӗмпӗрӗ ҫук пулсан?
— Тапӑп, тапӑп тапӑ айне кӗрех кайӑп.



Ť ť *Ť ť*



НАŤУШ вӑрмана ŤЫХА шырама кайаť. Вӑл ӑна тупаť те, тавӑрӑнаť. Наťуш ҫул ҫинђе йурӑ йурлаť:

**Й у р ӑ.**

Хурӑн ҫулҫи ҫурӑлсан,
Килет вӑрман илемӗ.
Хурӑн ҫулҫи тӑкӑнсан,
Кайаť вӑрман илемӗ.

Хĕвел хĕрелсе тухсассăн,
Килет тĕнђе илемĕ.
Хĕвел анса ларсассăн,
Кайат̆ тĕнђе илемĕ.

Ӈ ӈ  *Ӈ ӈ*

## М Ă К Ă Ӈ.

Пирĕн пўрт хыҫĕнђе пĕђĕк пахђа пур. Ҫула унта мăкăӈ ўсет. Унăн ђеђекĕсем хĕрлĕ те, шурă та пулаҫҫĕ. Мăкăӈăн пуҫĕ шултăра. Ăшĕнђи вăрри сĕт пек тутлă. Ăна нумай ҫиме йурамаст̆: ҫывăрас килтерет.

## П а х ђ а.

Пирĕн пахђа пит лайăх. Епĕр аттепе унта улмуҫҫисемпе ҫырла йăвăҫҫисем ўстеретпĕр. Анне хăйар, купăста, кишĕр тăват̆.

## К и ш ĕ р.

Кишĕр пахђара ўсет. Вăл хĕрлĕ те, шурă та пулат̆. Хĕрлĕ кишĕр шурринђен тутлăрах. Кишĕре ђĕрĕлле те ҫийеҫҫĕ, йашка ҫине те йараҫҫĕ, типĕтсе ђей вырăнне те ĕҫеҫҫĕ.

## Ҫ а р ă к.

Ҫарăк та пахђара ўсет. Вăл сарă та, шурă та, хĕрлĕкăвак та пулат̆. Сарă ҫарăк ыттисенђен тутлăрах та, сĕтеклĕрех те пулат̆.



## Супăҫ.

Аҫасем супăҫ шывĕ тунă. Ăна улăм пĕрҫипе вĕрсе хăмпă йара пуçланă. Хăйсем хăмпине вĕре-вĕре вĕçтернĕ. Хăмпи симĕсĕн кăвакăн курăннă.

### Кĕтерне.

Кĕтернене амăшĕ супăҫ илсе панă. Вăл питне те, мăйне те супăҫпа çунă Унăн пиҫĕ те, мăйĕ те, хăлхи те, аллисем те таптаса пулнă.

## Ҫ ҫ Иҫуш.

Пирĕн Иҫушăн шăлĕ хуралса пĕтнĕ. Çăварĕнҫен пĕр май шăршă кĕрет. Пĕрре ăна Куҫа аппа: Иҫуш, апат çинĕ хыççăн çăвара ҫўкес пулаť, унсăрăн шăл çĕрет, терĕ.

### Кукăҫ.

Пĕрре анне çĕрулми кукăлĕ пĕçерҫĕ. Епĕр сĕтел хушшине уйранпа кукăҫ çиме лартăмăр. Пирĕн Ҫава аллине çумасăрах кĕрсе ларнă. Анне ăна: Ҫава, алă çумасăр çиме лармаççĕ: апла лайăх мар, ҫир йерет, терĕ.



## ПАЉУК МУЂЕЙ.

Паљук муђей çарăк акнă, тет. Çарăкĕ темĕн пысăкĕш ÿснĕ, тет. Паљук муђей çарăкне кăлар-ма тытăнђĕ, тет. Туртаĭ, туртаĭ, тет, туртса кă-лараймасĭ, тет. Ђĕнђĕ. тет ку арăмне. Арăмĕ Па-љук муђейрен, Паљук муђей çарăкран тытрĕ, тет. Туртаççĕ, туртаççĕ, тет. туртса кăлараймаç-çĕ, тет.

Арăмĕ ђĕнђĕ, тет, хăй хĕрне. Хĕрĕ амăшĕн-ђен, амăшĕ ашшĕнђен, ашшĕ çарăкран тытрĕ, тет. Туртаççĕ, туртаççĕ, тет, туртса кăлараймаç-çĕ, тет.

Ђĕнђĕ, тет хĕрĕ хăйсен анђăкне. Анђăкĕ хĕртен, хĕрĕ амăшĕнђен, амăшĕ ашшĕнђен, аш-шĕ çарăкран тытрĕ, тет. Туртаççĕ, туртаççĕ, тет, туртса кăлараймаççĕ, тет.

Анђăкĕ ђĕнђĕ, тет, кушакне. Кушакĕ ан-ђăкран, анђăкĕ хĕртен, хĕрĕ амăшĕнђен, амăшĕ ашшĕнђен, ашшĕ çарăкран тытрĕ, тет. Туртаç-çĕ, туртаççĕ, тет, туртса кăлараймаççĕ, тет.



Ђӗнђӗ, тет, кушакӗ шăшийе. Шăшийӗ кушакран, кушакӗ анђăкран, анђăкӗ хӗртен, хӗрӗ амăшӗнђен, амăшӗ ашшӗнђен, ашшӗ ҫаракран тытрӗ, тет. Туртрӗҫ, туртрӗҫ, тет те, туртрӗҫ кăларђӗҫ, тет.

### А ҫ т у к.

Пирӗн Аҫтукӑн куҫӗ пӑсӑлҫӗ. Анне кӑна лекӗр патне йаҫӗ. Лекӗр ӑна куҫне йама емел парса йанӑ, тата куҫне таса усрама каланӑ.



Аҫтук лекӗр каланӑ пек тума пуҫласан, унӑн куҫӗ ҫасах тӳрленнӗ.

### К у ҫ а.

Куҫа ҫирлӗ выртать. Амӑшӗ ӑна пӗремӗк парать. Куҫа пӗремӗкне пӗрре ҫыртать те, ҫумне хурать. Иван ҫав пӗремӗке илет те ҫийет. Хайхи Иван тепӗр куннех Куҫа ҫирӗпе ҫирлет.

### Пионерсен вӑйи.

Епӗ пиҫҫепе хула пасарне кайрӑм. Хула тулашӗнҫе, ҫерем ҫинҫе, аҫапӑҫа пухӑннӑ. Пурин те мӑйӗсенҫе хӗрлӗ тутӑр, хӑйсем ҫунтанах урисемпе пысӑк ҫӑмха ыватҫкалаҫҫӗ. Епӗ пиҫҫерен: кусем камсем? тесе ыйтрӑм. Пиҫҫе мана: вӑл пионерсем, футполла вылаҫҫӗ терӗ.

Вĕсем саваннине кура манан та футполла питĕ выљас килђĕ.

## Футпол; пионер—Фф *Фф*, Оо *Оо*

### Пионер йурри.

Пĕђĕкçеç путене
Сарă тулла йуратат,
Йуратат, йуратат
Ђăнахах та йуратат.
Пĕђĕкçеç пионер
Çĕн йĕркене йуратат,

Йуратат, йуратат,
Йалан пĕрле пуханат.
Çак Шупашкар ађисем
Пионера йуратаç.
Пионера йуратаç,
Пионера çыранаç.

### В ă й ă.

Таптаса карташ варинђе пĕр купа хăйăр пулнă. Ађасем карташне тухнă. Унта вĕсем хăйăрпа выљама тытăннă. Хăйăртан пĕђĕкçеççĕ купасем тăва-тăва лартнă. Камăн купи çÿлĕрех? тесе тавлашнă хăйсем.

### Р о м а н.

Роман выртат те, тĕлĕкĕнђе кĕсел курат. Çиесђĕ,—кашăк çук. Хай Роман тепĕр каçхине аллине кашăк тытса выртат. Кунĕнђе кашăк та пур,—кĕсел çук.

Çак калавра миçе уçă сасă?
Миçе хупă сасă?

### Х ă н а с е м.

Ђавапа Паљук Аљтук патне хăнана кайнă. Вĕсем пахђана кайса, çатан çумне ларнă. Аљтукĕ çăкăр ђĕлли çине çу сĕрсе пынă. Хăйсем йурла йурла çисе ларнă.

## Михаҕа.

Пӗрре Михаҕа вӑрмана кайнӑ. Вӑрманта вӑл йуман айӗнҕе кӑмпа курнӑ. Кӑмпи ватӑ пулнӑ. Ӑна никам та татман. Михаҕа ӑнакӑна пӗлмесӗр, кӑмпана татнӑ та, килне илсе кайнӑ. Килне пырсан: акӑ епӗ йепле аван кӑмпа татрӑм, тенӗ. Унӑн кӑмпи ҫӗрӗк пулнӑ.

## Микулай.

— Микулай, авӑн ҫапма кил!
— Вар ыратат.
— Микулай пӑтӑ ҫиме лар!
— Пысӑк кашӑккӑм ӑҫташи?

## Ҕӑрӑш.



Ҫуркунне йӑвӑҫҫем вӑрманта симӗс ҫулҫисемпе хумханса, савӑнса ларнӑ. Пӗр ҕӑрӑш анҕах ҕӗнмесӗр ларнӑ. Кӗр ҫитсен, лешшем ҫара туратҕӗсене тӑсса хурланса ларнӑ. Ҕӑрӑш анҕах ҫав ҫавах шавласа ларнӑ, ҫулахи пекех вӑл симӗс пулнӑ.

## Авӑн уйӑхӗ.

Ҕӗвӗл ҕӗвӗл ҫерҫисем
Хӳме ҫумне сӑрӑннӑ
Унта кунта ерешмен
Карта тытса ҫавӑрнӑ...



Патти патти тăпађи
Сарăм кĕлти кисренет.
Вăрман хĕрри, сат пахђи
Сарă сăнпа саралаť.

Ҫак сăвва ҫырса илнĕ ђух, хытă сăмахсене паллă туса тухăр. Унтан ҫемҫе сăмахсене те паллă туса тухăр.

## Катуҫпа Маруҫ.

Пĕр ирхине Катуҫпа Маруҫ вăрмана кăмпана кайнă Маруҫ пĕђĕкҫĕ пулнă. Вĕсенĕн вăрманта пĕр пĕђĕкҫĕ ҫырма урлă каҫҫа каймалла пулнă. Катуҫ урисене салтнă та, Маруҫа ҫурăм хыҫне ҫакса шыв урлă каҫара пуҫланă. Маруҫ! авантарах лар! мăйран ан пу! апла мана сывлама йăвăр, тенĕ. Ҫапла вара Катуҫ Маруҫа шыв урлă йăтса каҫнă.

## Шăши ҫурђĕ.

Хирте лаша пуҫ шăмми выртнă. Шăши ђупса пыраť те, калаť: лайăх ҫурт! лайăх пӳрт! сан ăшăнта кам пурăнаť? тет. Кăна хирĕҫ ним сасă та ҫук. Хай шăши пуҫ шăмми ăшне кĕрет те, савăнса ăшăнса пурăна пуҫлаť.

## Х у р с е м.



Хурсем шыва аннă. Вĕсем шыва кĕрсен, шыв, вĕсенђен унка пула пула, хумханса кайнă. Кăшт тăрсан, шыв каллех йапйака пулса тăнă. Шывĕ тăптăрă пулнă. Хурсен урисем курăнса пынă.

## ХУР УРИ.

— Ах, хур ури тутлăççке!

— Есĕ çисе пăхни мĕн?

— Çийессе хам çимен те, пирĕн кукка улпут çинине курнă.

### Пирĕн йал.

Пирĕн йал пысăк. Вăл вăрманпа шыв хушшинҫе ларат. Урамсем тўптўрĕ, таптаса. Çуртсем йăвăç; хăшне улăм, хăшне ҫус витнĕ.



Пирĕн йал шывĕ вăйлă. Вăл шывра икĕ ҫуллă арман авăрат. Унта тĕрлĕ пулă пур. Хуркăвакал шывра савăнат. Çулла пулсан епĕр шывран туха пĕлместпĕр.

### Выҫама ҫĕнни.

Аҫа Ваҫук, урама,
Унта сана кĕтеççĕ.
Мишша, Анна, Хĕвекла
Выҫамашкăн ҫĕнеççĕ,

Малтан выҫар лапталла,
Унтан вара лашалла.
Кайран епĕр çырмана,
Шур тăм кайса илĕпĕр.

Унтан епӗр вӑл тӑмран
Кӗлеткесем тӑвӑпӑр;
Лашасем те, ӗнесем,
Йӑтӑсем те тӑвӑпӑр.

Ӳ Ң, Ԓ саспаллисене мӗлле сӑмахсенҫе ҫыраҫҫӗ?

## Пирӗн килйышӗ.

Епӗр мӗн пурӗ тӑваттӑн: атте, анне, епӗ, тата йӑмӑк. Атте хирте суха сухалаӳ, тырӑ акаӳ. Хӗле кӗрсен вутӑ турттараӳ: ҫӑл шав тулта асапланса ҫӳрет. Анне тата пирӗн ҫийепуҫа тирпейлет, ҫӑваӳ, йашкаҫӑкӑр пӗҫерет. Вӗсем ӗҫлесе ҫӳренӗ ҫух, епӗ сӑпкари хамӑн пӗҫӗкҫӗ йӑмӑка сиктерсе ларатӑп.

## Амӑшӗпе хӗрӗ.

Амӑшӗпе хӗрӗ ҫывӑрма выртнӑ, тет. Амӑшӗ кунӗпе пӗр канмасӑр ӗҫленӗ, тет. Хӗрин ҫыврасси килмест, тет, тек йурласа выртаӳ, тет. Амӑшӗ: хӗрӗм, ан йурла, манӑн ҫыврас килет, тесе калаӳ тет. Хӗрӗ амӑшне итлемест, тет, тата хытӑрах йурла пуҫларӗ, тет. Вара амӑшӗ хӗрне тепӗр пӳлӗме хупса хуҫӗ, тет.

**Йумахсем:** Икӗ ункӑ, икӗ вӗҫ, варринҫе пӑта, ҫавӑ мӗн пулаӳши? Ҫӳлте те шӑтӑк, тӗпӗнҫе те шӑтӑк, варринҫе кӑвар, ҫавӑ мӗн пулаӳ? Курпун старик йӗр йӗрлет?

## М и к у л а й.

Микулай аҫасемпе пӗртте выԓа пӗлмесҫӗ: йе ҫапӑҫаҫҫӗ, йе йултапшене мӑшкӑлаҫҫӗ. Вара пур аҫа та унтан сивӗнҫӗҫ, унпа ҫӳреме пӑрахрӗҫ. Аҫанӑн пӗҫҫен ҫӳрес килмерӗ пулмалла. Вара вӑл аҫасемпе пит ҫипер ҫӳрекен пулҫӗ.

## Н а ҫ т у к.

Наҫтук ҫыру вӗренсе килне таварӑннӑ. Килӗнҫе амӑшӗ анҫах пулнӑ. Наҫтук сӗтел хушшине ларнӑ та, амӑшне пӗр халлап вуласа кӑтартнӑ. Амӑшӗ савӑнса итлесе ларнӑ.

Ҫак калавра миҫе йумах?
Кашнӑ йумах хыҫҫӑн мӗн лартаҫҫӗ?
Пӑнҫӑ хыҫҫӑн сӑмаха мӗлле саспаллипе пуҫлаҫҫӗ?

## Ҫ ы р у.

Йуратнӑ анне! Епӗ ӗнтӗ вулама, ҫырма вӗрентӗм. Сурхурире есӗ кунта курма кил. Килнӗ ҫух ҫӑм ҫӑлха илсе кил. Сире салам йаратӑп.

Йупан 15-мӗш кунӗ. Иван.

## Йулхав аҫапа ӗҫҫен аҫа.

Йулхав аҫа каланӑ: вӗренме ыран та вӗренӗпха, пайан уҫӑлса ҫӳрем, тенӗ. Ӗҫҫен аҫа каланӑ: уҫӑлса ҫӳресси тармӗха: вӑхӑт пулсан ыран та ҫӳрӗп, вӗренмеллине пайанах вӗренсе хурам, тенӗ.

## Курнине тӑвасах килет.

Йупа уйӑхӗ ҫитрӗ. Пур те Револҫутси праҫнӑкӗ ҫитет, теҫҫӗ. Шкулӑ коммунӑри аслӑрах аҫасем йурӑсем, сӑмахсем вӗрене пуҫларӗҫ. Епӗр те вӗрентекене: пире те вӗрент! терӗмӗр. Вара вӑл пире те сӑмахсем, йурӑсем вӗрентрӗ.



## Пирĕн ĕç.

Пролеттари праçнăкĕ çывхарҫĕ. Пирĕн аслă аҫасем сҫенă турĕç. Епĕр, пĕҫĕккисем, ҫăрăш тураҫĕпе, хĕрлĕ йалавсемпе хамăр шкула илемлетрĕмĕр.

## Савăнăçлă кун.

Пайан ĕнтĕ Револҙутси праçнăкĕ çитрĕ. Пирĕн аҫасем пур те савăнса ҫупкаласа çӳреççĕ, хатĕрленеççĕ. Кăнтăрла миттĕнка кайса килтĕмĕр. Каçхине сҫенă çине тухса йурларăмăр, вĕреннĕ сăмахсене каларăмăр. Хăнасем те нумай пухăнҫĕç.

## Михалҙа.

Пирĕн атте вăрçăра вилнĕ. Халĕ анне, епĕ тата виçĕ йăмăк пурăнатпăр. Епĕ аннене пур ĕçре те пулăшатăп.

Кĕр çитсен аҫасем шкула кайма пуçларĕç. Епĕ аннене: манăн та пит вĕренес килет! терĕм. —Вĕренессӳ килет пулсан, кайах еппин, терĕ анне. Епĕ тепĕр кунне ирех аҫасемпе шкула ҫупрăм.

Шкулта аҫасем партта хушшинҫе карттинсем туса лараççĕ. Вĕрентекенĕ вĕсем хушшинҫе кăмăллăн калаçça, вĕсен ĕçне тӳрлеткелесе çӳрет.

**Йумахсем:** Иккĕн итлеççĕ, иккĕн пăхаççĕ, пĕри калаçать? Икĕ кашта шурă ҫăххăм пур?

## Шкулта.

Калăрха, аҫасем, шкулта есĕр мĕн тăваттăр?
— Вулатпăр, çыратпăр, йурлатпăр, выҙат-

пăр, курман йапаласене кирек ăçта курса çӳретпĕр, каскаласа йапаласем тăватпăр.

— Мĕн çыраттăр шкулта?

— Темĕн те пĕр çыратпăр, карттинккăсем тăватпăр.

Çак калавра миçе ыйтулла йумах?
Ашасем, ыйтулă йумахсем хăвăр тупса парăрха?

## Йапалуна тирпейлĕ усра.

Пĕрре пирĕн Маруç каçхине сĕтел хушшинче çырса ларачĕ. Ларсан ларсан, йапаллисене пуçтармасăр, çывăрма выртрĕ. Наçтук йăмăкĕ ирне ирех тăнă та Маруç йапалисене пĕтĕмпех тустарса пĕтернĕ. Хайхи Маруçăн шкула кайма вăхăт çитрĕ. Пăхат—сĕтел çинче нимĕн те çук. Шкула кăмăллăн тухса кайас вырăнне, йĕре йĕре йапалисене шыра пуçларĕ. Çавăнпа шкула та вăхăта çитеймерĕ.

**Йумахсем**: Шура хир, хура вăрлăх. Çава мĕн пулатши?
Кĕпе мар, хăйне çĕленĕ; çын мар, хăй каласа парат. Çава мĕн пулатши?

## Х ĕ л л е.

Çанталăк сивĕтнĕ çемĕн сивĕтет. Кун кĕскелсех пырат. Çырмари шыв пăрланчĕ. Йур çума пуçларĕ. Вылчăх чĕрлĕхе, хуркăвакала картана хупса, апат пама пуçларĕç. Кунта йулакан вĕçен кайăксем, ăçта килчĕ унта вĕçкелесе, апат шыраса çӳреççĕ.

## Йур кĕлетке.

Çанталăк ăшă. Епĕр кăнтăрлахи апат çисе шкула таврăнтăмăр. Унтан йуртан çын кĕлетки тума тытăнтăмăр. Хамăрăн алăсем шăнна пул-

сан та, ҫыннине туса пӗтертӗмӗр. Ҫынӗ пит аван пулђӗ.

## А ђ а с е м.

Пайан тулта ӑшӑ. Епӗр ҫырма хӗррине шыв сапрӑмӑр. Унтан ҫунашкапа, куњкипе йарӑнма тытӑнтӑмӑр. Миҗҗа шыв йӑтаканни пулђӗ, епӗ пӑрне шӑпӑрпа шӑлса тасатрӑм.

### Пирӗн шухӑш.

Пирӗн шухӑп урамалла,
Сывлӑш уҫӑ, кун ҫутӑ.
Епӗр тулта выљанӑ ђух,
Ђун савӑнаҗ ирӗкре...
Вӑйӑ, кулӑ, сасӑ, йурӑ
Йан! йанраҗ пирӗн тавра.

Вӑхӑђӗпе кирлӗ ӗҫ те,
Ҫунаҗ пирӗн алӑра...
Шухӑш ӳсет, ӑс пуҫтарнаҗ,
Вӗрентекен ҫул к(ӑ)тартаҗ,
Вӑхӑт ҫитӗ, ҫын пулӑпӑр,
Сирӗн алла тӑсӑпӑр.

**Йумахсем:** Асанне пӳрђӗ тӗлӗнђе ҫур ҫӑкӑр тӑраҗ, йӑтӑсем вӗреҫҫӗ, хыпса илеймеҫҫӗ? Шур пӗркенђӗк пӗтӗм ҫерӗ хупларӗ? Пуртӑсӑр, савӑлсӑр асатте кӗпер хыврӗ? Атӑл урлӑ лӑпсӑр, лапсӑр упа каҫаҗ?

### Хӗллехи каҫ.

Пӗлӗт ҫинђи ҫӑлтӑрсем
Ытла сивӗн пӑхаҫҫӗ,
Унта кунта хӳмесем
Ҫӑтти ҫатти тӑваҫҫӗ.
Уйӑх тавра пӗр карта
Кӑшӑл туса ҫаврӑнӑ.
Йалти хресђен ҫыннисем
Канма выртнӑ, ҫывӑраҫҫӗ.

## Т ӑ л ӑ х а ђ а.

Каҫ пулнӑ. Ҫӑлтӑрсем йӑлтӑртатнӑ. Сивӗпе хӳмесем ҫӑттиҫатти тунӑ. Пӗр шӑнса хытнӑ тӑлӑх ађа урампа: ай сивӗҫке! ӑҫта кӗрсе ӑшӑнамши, хырӑм та пит выҫрӗҫке! тесе ђӗтресе утнӑ. Кӑна пӗр карђӑк курнӑ. Хӗрхенсе вӑл

ăна килне илсе кайнă, апат ҫитернĕ, унтан вырăн та сарса панă. Ађи вара хĕпĕртесе, тутлă ыйăхпа ҫывăрса кайнă.

### Тăвайкки йаранни.



Ех, тăвайкки, тăвайкки,—
Мĕн ђул ађа йаранат̆!
Ҫуна, йĕлтĕр, йе кунђкки
Тăвайккине йакатат̆.
Алсем хытса кӳпђени
Ађасене ним те мар.
Кулса кăна йаранар,—
Ҫав вăл хĕлле савăнни.

### Ђ ă р ă ш.



Килĕр, килĕр ађасем,
Ђăрăш тавра ҫавăрнар!
Ах, ҫунаҫҫĕ ҫуртисем,
Ат̆ăр йурра тытăнар!
Ҫуркуннехи йешĕл пек,
Пирĕн капăр ђăрăш пур
Хĕрлĕ, симĕс хутђеђек.
Ҫутă ҫăлтăр,—пур те пур
Ђăрăш, сана курсанах,
Ђун хĕпĕртет, савăнат̆,
Симĕс сăнна пăхсанах,
Ҫур ҫитессĕн туйăнат̆.

Ҫак сăвăра миҫе кăшкăрулла йумах?
Ађасем, кăшкăрулла йумахсем тупса парăрха?

### Е р н е х у ш ш и,

Тунтикун епĕр ĕне ҫинђен вуларăмăр, ҫыртăмăр, карттинсем турăмăр. Унтан тулта хамăр ĕне пурăнăҫне сăнарăмăр.

Ытларикун пирĕн ĕне куллен миҫе тенкĕлĕх апат ҫинине, унăн сĕђĕ хакне шутларăмăр.

Йункун ҫанталăк ашă пулђĕ. Кĕт йур ҫукаларĕ. Епĕр хĕллехи вăрмана курма кайрăмăр.

Кĕҫнерникун епĕр вăрманта курни, илтни ҫинђен каласрăмăр, ҫыртăмăр, хађăпа касса хутран хĕллехи вăрмана турăмăр.

Ернекун аҫасен хӗллехи вӑййисем ҫинҫен вуларӑмӑр, йурларӑмӑр. Куҫкки, ҫунашка илме миҫе тенкӗ укҫа кирлине те шутласах хутӑмӑр.

Шӑматкун пире вӗрентекен „пуканепе“ тилӗ тус ҫинҫен вуласа кӑтартрӗ. Ӑна выҫҫаса пӑхрӑмӑр. Пукане тус ҫинҫен туй йурри те йурларӑмӑр.

Вырсарникун пирӗн ҫпектаккӗҫ пулҫӗ. Епӗр хамӑр вӗреннӗ икӗ йумаха выҫҫаса кӑтартрӑмӑр.

**Йумах:** Ҫиҫӗ тӑванӑн пӗр йӑмӑк?

## Хӗллехи вӑрман.

Ҫаппа ҫара йӑвӑҫҫем
Шавламасӑр ларaҫҫӗ.
Пас айӗнҫи туратсем
Темле мӑннӑн курнаҫҫӗ.
Унта кунта кӗрт ҫинҫе
Тилӗ йӗрӗ палӑрать.
Унта кунта ун хыҫҫӑн
Йӗлтӗр йӗрри тӑсӑлать.

Сасӑҫӗвӗ ним те ҫук...
Йӗритавра шурӑ йур.
Акӑ утрӗ пӗр старик,
Пӑшалпала йӗр йӗрлет.
Каҫ та пулса ҫывхарҫӗ,
Тӑмана та вӑранҫӗ.
Пусӑ урлӑ йалалла
Вӗҫре карӗ ҫӑх тытма.

## Ҫ ӗ р ш ӑ т ӑ к ӗ.

Пирӗн вӑрманта сӑрт айӗнҫе тарӑн шӑтӑк пур. Ҫав шӑтӑкра ӗлӗк авал кайӑкла ҫынсем



урӑннӑ, теҫҫӗ. Вӗсем ҫӗрӗ ашпа, ҫӗрӗ пулӑ ҫисе пурӑннӑ. Ҫӗҫҫисене, пурттисене ҫултан

тунӑ. Тумтирне тискер кайаксен тирӗнҫен тунӑ. Ҫӳлмекӗсене тӑмран тунӑ. Вуҫахри вута вӗсем нихҫан та сӳнтермен, мӗншӗн тесен, вӗсенӗн халҫхи пек шӑрпӑк пулман.







Ҫынсене, тӗрлӗ йапаласене вырӑнтан вырӑна куҫаракансен карттинӗсем:



















## Лаша.

Лаша килти выҫӑх. Вӑл суха тӑват, вутӑ турттарат, тата тӗрлӗ йапаласене, ҫынсене, кирлӗҫух вырӑнтан вырӑна куҫарат. Хуҫи ӑна ӗҫленӗшӗн ырӑ апат парат, ӑшӑ вырӑнта усрат, аҫашлат, йуратса пӑхат. Лашасем: турӑ, ҫӳрен, пурлӑ, тимӗркӑвак, шурӑ, сарӑ тӗслӗ пулаҫҫӗ. Лаша аҫине ӳыха теҫҫӗ.



Ҫак калава ҫырнӑ ҫух, калаври сӑмахсене татӑкӑн ҫырса пырӑр.

## Ӗне.

Пирӗн анне ир ирех тӑрат. Вӑл сӗт ҫӗресне илет те, ӗне патневаскат. Ӗне ҫиллине вӑл ашӑ шывпа ҫӑват, шӑлса типӗтет, вара тин сума ларат. Ӗни сунӑ ҫух пӗр тапранмасӑр кавлесе тӑрат.



Сӑвакан ӗне.

Пӗр арӑмӑн ӗни куллен пӗр ҫӗрес сӗт панӑ. Вӑл пӗрре хӑнасем ҫӗннӗ. Хӑнисем валли сӗт ытларах пултӑр тесе, вӑл ӗнине вунӑ кун сумасӑр тӑнӑ. Ӗне вунӑ кунтан пӗрре сусах вунӑ

ҫӗрес сӗт парӗ тесе шухӑшланӑ вӑл. Анҫах ӗнин сӗҫӗ типсе ларнӑ. Вӑл сӗтне ӗлӗкхинҫен те сахалтарах панӑ.

### Сысна.



Сысна апат пит нумай ҫийет. Вӑл нимӗнле апата та тиркемест: мӗн килҫ ӑна ҫийет. Пыҫҫӑк тавраш курсан, савӑнса тӳшек ҫине выртнӑ пек, кӗрсе выртаŷ.

Сыснан сӑмси пысӑк мар. Унпа вӑл ҫерем ҫӗтме пит йуратаŷ. Ҫӑварӗ унӑн хӑлхи патнех пыраŷ. Хӑлхи пысӑк, кӗлетки курпун, ури кӗске, хӳри...

### Хураҫкапа ҫурисем.

Хураҫка йатлӑ йӑттӑн ҫурисем пулнӑ. Вӗсем карташӗнҫе утӑ ҫинҫе выртнӑ. Пӗрре Хураҫка таҫта тухса кайнӑ. Аҫасем пынӑ та пӗр ҫурине пӳрте илсе кӗнӗ. Хураҫка тавӑрӑнсан йӑнӑшша вӗре пуҫланӑ. Аҫасем йӑтӑ ҫурине илнӗ те, амӑшне панӑ. Амӑшӗ ӑна ҫӑварӗпе хыпса карташне илсе тухнӑ.



### Хураҫкапа кушак.

Пӗрре кушак ҫисе тӑраŷ. Ун патне Хураҫка пыҫӗ тӑҫӗ. Кушак Хураҫкана сӑмсинҫен йаҫӗ илҫӗ. Хураҫки кушака хӳререн йарса илҫӗ. Кушак Хураҫкана куҫӗнҫен ҫавса илҫӗ. Хураҫка кушака мӑйӗнҫен йарса илҫӗ. Ҫав вӑхӑтра аппа

шыв ăсса иртеҙҙĕ. Вăл ҙарăнҙĕ те кушакпа йăтта шывпа ҙаш! тутарҙĕ. Хайхисем тин тӳпелешме ҙарăнҙĕç.

 

## Кушак.

Пĕр кушак хĕвел ăшшинҙе ăшăнса выртаӳ. Хăй шурă мăйлă, йапйака, сăрă уралла. Шурă ăмăрне çулакаласа выртаӳ. Хӳрине хăй кăшт вĕл вĕл сиктеркелет. Кусне пĕр илмесĕр кĕтесри шăши çине пăхса выртаӳ.

## Икĕ йĕкехӳре.

Икĕ йĕкехӳре пĕр çăмарта тупнă, тет. Ăна уйăрса çийешшĕн, тет. Вăл çăмартанах курак та курнă, тет. Пыраӳ тет кăсем патнелле. Мĕн тăвас йĕкехӳресенĕн? Ăçта ҙикес çăмартана? Ҙасрах йăтса кĕрес—алăсем кĕске, тытма çитеймесçĕ. Кустарса кĕрес—çĕмĕрлесрен хăрушă. Хайхисем пĕри ҙасрах çăмартана тăвата урипе ыталаса месерле выртрĕ, тет. Тепĕри ăна хӳринҙен йарса илсе, тĕпсакайне сĕтĕрсе кĕрсе кайрĕ, тет.

**Йумах:** Пĕр шăшийĕн икĕ хӳре? (Çăпата).

## Пирĕн анне.

Пирĕн анне çăварни тĕлнелле çип шуратса пир тĕртме тытăнаӳ. Пирне вара вăл йур çине сарса шуратаӳ, типĕтет, çапаӳ. Унтан пи-

ре валли кĕпесем касса ç̌ĕлет, тĕррине те тĕрлет. Ç̌ав хушăрах пăрушне те, путек сурăхне те пăхаť.

Епĕ хам куллен аҫа пăхатăп, ç̌ĕрĕ тăватăп, хăш ҫух путексене те апат паратăп.

## Ç̌ у р п у л а ť.

Иалтăртатаť сар хĕвел;
Кунран кунах ăпăтаť.
Сисмесĕрех сивĕ хĕл
Ç̌ур ăшшине парăнаť,
Пур ç̌ĕрте те шурă йур
Хĕвел ăшшипе пусăрнаť;
Пĕҫĕккĕнех ç̌уна ç̌ул
Навусланаť, хуралаť,
Уй хĕринҫи Ăç̌тапан
Сарай ç̌инҫен йур тăкаť;
Пĕҫĕк аҫи сар Иван
Шăхлиҫ калаť, савăнаť.
Йунка шывĕ ç̌ийĕнҫе
Пасар тăваť хĕрупраç̌;
Кĕлпе пиç̌нĕ сўс ç̌ипне
Ҫўхентерсе тасатаç̌.
Арман пĕви патĕнҫе
Хура Митри пăр касаť.
Ç̌апла хуллен, майĕпе
Ç̌урхи вăхăт ç̌ывхараť.

## Аҫасен пурăнăç̌ĕ.

Ç̌уркунне ç̌итнĕ. Шывсем йуха пуç̌ланă. Аҫасем турпас татăкĕсем илнĕ. Вĕсенҫен кимĕ туса шыва йанă. Кимми шыв май йухса кайнă. Аҫасем нимĕне пăхмасăр, ун хыç̌ç̌ăн кăшкăрса ҫупса пынă. Ҫупса пынă ҫух лупашкана кĕре кĕре ўнкĕ.

. . . . .

Хĕвел хĕртнĕç̌ем хĕртет. Ç̌анталăк куллен кун улшăнса пыраť. Шăнкăрҫăсем, тата ытти кайăксем ăшă йенҫен вĕç̌ç̌е килнĕ те, шăрантараç̌ç̌ĕ йуррине. Шкулти аҫасем вĕрентекенпе вăрман пурнăç̌не сăнама кайнă. Унтан йăвăç̌ тураҫĕсем хуç̌ç̌а килнĕ те, кĕленҫе ăшне хăшне пывпа, хăшне шывсăр лартнă. Ç̌акăнта вĕсем ак мĕн курнă:

Кашни йăвăҫăн турат пур. Туратсенђе папакки пур. Папакки ăшĕнђе пĕђĕк ҫулҫăсем пур. Вăл ҫулҫăсем хĕлле хытă хупăпа ђĕркенсе витĕнеҫҫĕ. Ҫуркунне вĕсем нӳрĕхпе, тата хĕвел ăшшипе пысăкланса хуппине сирсе йараҫҫĕ те, симĕслене пуҫлаҫҫĕ.

## Ҫуркунне.

Иртсе кайрĕ сивĕ хĕл,
Кулса йађĕ сар хĕвел.
Пит васкаса йур кайат̆.
Шăнкăртатса шыв йухат̆.
Ҫурхи хĕвел йăл пăхсан,
Пĕтĕм ҫĕртен йур кайсан,
Тухас килет пуссалла,
Ђуна туртат̆ унталла.
Ђеђек курăк ав ӳсет,
Тăрри сасси илтĕнет,
Кăвак пĕлĕт уҫălат̆
Ăна пăхса ђун сават̆.

## Ҫу уйăхĕн пĕремĕш кунĕ.

Ҫу уйăхĕн пĕремĕш кунĕ—вăл пĕтĕм тĕнђери пролеттарисен праҫнăкĕ. Ҫак кун пĕтĕм тĕнђипе ĕҫлекенсем ĕҫĕсене пăрахса, праҫнăк тума урама тухаҫҫĕ. Вĕсем ҫапла праҫнăк туни—пролеттарисем пĕрлĕ кĕрешше ирĕке тухассине пĕлтерет. Унган тата вĕсем пур те пĕр ҫемйине систерет.

### Епĕр праҫнăк туни.



Ҫăвăн пĕремĕш кунĕнђе епĕр хамăр шкул ăшне тин сарăлнă ђеђексемпе, симĕс курăксемпе илемлетрĕмĕр. Унтан тумланса урама халăхпа пĕрле праҫнăк тума тухрăмăр, каҫхине спектаккăђ лартрăмăр. Пирĕн пата ытти шкулти ађасем те праҫнăк ирттерме пуҫтарăнђĕҫ.

## А ђ а с е м.

Максӑм:—хӑш ђеђекне татамши? тесе курӑк ӑшӗнђе ђупкаласа ҫӳрет.—Тӗслӗренех татӑпӑр. Ҫак ҫаран ҫинђе миҫе тӗслӗ ђеђек ӳснине пӗлме, кӗнеке ӑшӗнђе типӗтӗпӗр. Унтан майлаштарса хут ҫине ҫыпӑҫтарӑпӑр, йађӗсене ҫырӑпӑр, тет, Ђави.

## Т ӑ р и.

Айакран, ашӑ йенђен тӑри вӗҫҫе килнӗ. Вӑл хӑйне йӑва ҫавӑрнӑ та, ђӗпӗсем кӑларнӑ. Ђӗпписемпе пурӑнма ӑна пит лайӑх пулнӑ. Ђӗпписене те амӑшӗ пур ђух аван пулнӑ.

Пӗр ађа серепе хурса тӑрийе тытнӑ та, килне илсе кайнӑ. Тӑри пӳртре ирӗкри пурӑнӑҫшӑн та, ђӗпписемшӗн те пит хуйхӑрса пурӑннӑ.

Ађа тӑрийе тыв ӗҫтерме маннӑ та, тӑри вилнӗ. Амӑшӗсӗр пуҫне ђӗпписем те хирте вилсе пӗтнӗ.

## У т а р т а.



Вӑрманта пирӗн ӳтар пур. Ҫула, ђеђексен ырӑ шӑрши сарӑла пуҫласан, пирӗн пиђђе куллен хуртсене сыхлама кайаҭ. Епӗ те унпала ђасђасах кайатӑп. Вӑрманта пит аван. Кайӑксем йанӑратса йурлаҫҫӗ. Куккук пӗтӗм вӑрмана йан йараҭ. Йывӑҫҫем сипсимӗс сарӑлса лараҫҫӗ. Сывлӑш



уҫӑ. Ҭеҭексене ытарма ҫук, пӗринҭен пӗрри хитре. Вӗлле хурҭӗ вӗсене пыра пыра ҭуптӑваҭ, ӑшӗнҭи пылне хӑй вӗллине йатаҭ.

## Йурӑ.

Шывсем ҭаксан, йур кайсан,
Ака тума ҫын тухсан,
Ма кайас мар вӑрмана,
Серте татма, уҫӑлма?
Серте, ҫеҫпӗл ӳснӗ ҭух,
Хура вӑрман йешӗрет;
Серте йӑл-йӑл пӑхнӑ ҭух?
Ҭун савӑнаҭ, киленет.

Шур йур кайсан, вӑрмана
Ырӑ шӑршӑ кӗрейҭӗ,
Хӗвел ҫутти ҫуталса
Ӑшшӑн, ӑшшӑн пӑхайҭӗ.
Симӗс вӑрман тумланаҭ,
Шӑпҭӑк йурри шӑранаҭ...
Ма кайас мар вӑрмана,
Ҫурхи кунта савӑнма?

## Ҭӗрӗп.

Аҭасем курӑк ӑшӗнҭе ҭӗрӗп тупнӑ. Ваҫҫук ӑна килне йӑтса кайашшӑн пулнӑ. Анҭах йӑтма нийепле май пулман: ҭӗрӗпӗн йӗпписем ҭикнӗ. Аҭасем ҭӗрӗпе ҫӗлӗк ӑшне хурса илсе кайашшӑн пулна: ҫӗлӗкӗ пӗҭӗкҫӗ пулнӑ. Ҫапла вара ҭӗрӗпе нийепле те илсе кайайман.



## Пирӗн вӑкӑр.

Пирӗн вӑкӑр пурҭҭӗ. Вӑл пит усалҭҭӗ. Ун патӗнҭен иртсе кайма пур те хӑраҭҭӗҫ. Пӗрре ҫапла асатте ӑна кӗтӗве хӑваласа кайаҭ. Вӑл асаттене хирӗҫ тӑҭӗ те, тӗксе йӑвалантарса йаҭӗ. Хӑй айне тӗркелесе ҭикрӗ. Ҫынсем вӑкӑра хуса йаҭӗҫ те, асаттене киле илсе кайрӗҫ. Ҫавӑнтан кайран асатте нумай пурӑнаймарӗ вара—вилҭӗ. Асатте вилсен вӑкӑра аслӑк айне илсе кайрӗҫ те, пусрӗҫ.

## Ҫапа пӗлмен пушӑ хӑйне ҫавӑрӑнса тивнӗ.

Манӑн Петӗр йатлӑ йулташ вӗрҫӗнӗ пушӑ йаврӗ. Ҫав пушипе куракана пӗрне ҫапаҭҭӗ. Пӗрре ҫапла ҫисе ларакан йӑмӑкӗ патне пыҭӗ те, пушипе шарт! тутарҭӗ пуҫӗнҭен. Йӑмӑкӗ йӗре пуҫларӗ. Амӑшӗ илтрӗ те ҭупса та кӗҭӗ. Петӗртен

пушине туртса илђӗ те, хӑйне ҫаптара пуҫларӗ: Ан тив ҫынна. Ан тив ҫынна! Акӑ сана! терӗ.

Ҫапа пӗлмен пушӑ хӑйне ҫавӑрӑнса тивнӗ тесе ҫавӑнпа каланӑ та ҫав.

## Ађасем кашкӑрла выљани.

Пӗрре ађасем анкартине кайнӑ. Унта вӗсем кашкӑрла выља пуҫланӑ. Михаља кашкӑрӗ пулнӑ. Микулайпа Наҫтук сурӑхӗсем пулнӑ. Михађи кашта тӑрӑх ҫинђӗк уламӗ купи ҫина улӑхса кайнӑ. Микулайпа Наҫтук айалта кашкӑра кӗтсе тӑнӑ. Вӗсем айалта кашкӑра кӗтнӗ кӗтнӗ те, кӗтсе ывӑнсан кӑшкӑра пуҫланӑ. Михаља кӑшкӑрсан та пыман. Унтан вӗсем Михаљана шырама тытӑннӑ. Темӗн ђухлӗ шыраса та, тупайман ӑна. Вара вӗсем килне кайнӑ. Кӑшт тӑрсан Михаљана шырама амӑшӗ те пынӑ. Михаља! тесе кӑшкӑрнӑ вӑл. Пӗр сасђӗвӗ те пулман. Амӑшӗ вӑрмана, хире кайса шыранӑ.

Михаља! Михаља! тесе кӑшкӑрса ҫӳренӗ амӑшӗ. Михађи епӗ кунта, епӗ ҫывӑрнӑђђӗ! тесе ларӑ, тет ҫинђӗк уламӗ ҫинђе.

## Хут ҫӗлен.

Иванпа Петӗр хут ҫӗлен тума шухӑшланӑ. Иван Петӗре калаӑ: Петӗр есӗ ҫилӗм хатӗрле, епӗ хӑйӑсем шырӑп, тет. Вӗсем ђасах ҫилӗмпе хӑйӑине тупса хунӑ. Тепӗр кунне вӗсенӗн хут ҫӗлен пулса та, тӑнӑ. Вӗсем хут ҫӗлене йама урама тухнӑ. Анђах ҫил пулман та, хут ҫӗлен кӑшт та кайман. Вара Петӗрпе Иван хире кайнӑ. Хирте те ҫил пулман. Темӗн ђухлӗ ђупса асаплансан та, хут ҫӗлен кӑшт та кайман. Вара Петӗрӗ: вӗр, Иван! вӗр! тесе кӑшкӑра пуҫланӑ. Иван мӗн пур вӑйӗпе вӗрнӗ. Хут ҫӗлен ҫапах ҫӳлелле ҫӗкленмен. Ҫӗре персе аннӑ.

## Ђ ӗ п ӗ с е м.

Пирӗн сарӑ ђӑх пур. Вӑл вуник ђӗпӗ кӑларђӗ. Ђӗпписем амӑшӗпе курӑк ӑшӗнђе апат шыраса ҫӳреҫҫӗ, тусан ӑшӗнђе те йӑваланаҫҫӗ. Епӗ вӗсене куллен темиҫе хут: ђип, ђип, ђип! тесе йӑхӑрса апат параттӑм; шывне те ҫавӑнтах ҫатмапа лартса параттӑм. Хырӑмӗсем тӑрансан, кӗсем амӑшӗн ҫунађӗ айне кӗрсе йӑпшӑрӑнса лараҫҫӗ.



## Ҫӑхӑпа ҫӗкеҫ.

Пӗр ҫӑхӑ ҫӗлен ҫӑмартисем тупнӑ та, вӗсене пусма ларнӑ. Кӑна ҫӗкеҫ курат̆ те, калат̆: ытла та ӑссӑрҫке есӗ! вӗсене кӑларасса кӑларӑн та; ӳссе ҫитсен хӑнах усал тӑвӗҫ, тет.

## К ӑ в а к а л.

Пирӗн кӑвакалӑн ҫӗпписем тухрӗҫ. Аталаниҫҫен вӗсене епӗр пӳртрех усрарӑмӑр. Амӑшӗ вара нарт! нарт! нарт! тесе шыва кайашшӑн ҫӗпписене астара пуҫларӗ. Пӗр ернерен епӗ вӗсене ирпе ирех шыв хӗррине хӑваласа кайрӑм. Хам унта кунӗпех вара кайӑк тытасран сыхларӑм.



## Уйӑхпа кӑвакал.

Пӗр кӑвакал шывра ишше ҫӳрет, тет. Хӑй пулӑ шырат̆, тет. Кунӗпе шыраса та пӗр пулӑ та тытаймарӗ, тет. Ҫӗрле пулсан уйӑх ӗмӗлкине курах кайрӗ, тет. Ку пулӑ пулӗ тесе, ӑна тыташшӑн шыва ҫӑма паҫӗ, тет. Ытти кӑвакалсем курҫӗҫ, тет те, кунран кула пуҫларӗҫ, тет.

## Ҫулахи каҫ.

Тӑр ҫулахи каҫхине
Вӗри сывлӑш уҫӑлҫӗ,
Кунӗпеле ӗҫлекен
Тӗнҫе шӑпах лӑпланҫӗ.

Сайраран ҫеҫ катаран
Карӑш сасси илтӗнет.
Вӑл та пӑртак картлатсан
Ҫарӑнат̆ те тӗлӗрет.

Пӗлӗт ҫинҫи ҫӑлтӑрсем
Ҫынсем ҫине пӑхаҫҫӗ.
Хутран ситрен вӗттисем
Пытанмалла выҫаҫҫӗ.

Кӑвак пӗлӗт ҫатӑр пек
Ҫӑлтӑрсенҫен ҫӳлтерех.
Ӑвӑс ҫулҫи майӗпе
Ҫӗтренкелет тӳлекре.

## Суйеҫӗ.

Пӗр аҫа хирте сурӑхсем кӗтсе ҫӳрет, тет. Кашкӑр куран пекки туса ҫынсене: килӗр кунта! кашкӑр пур, кашкӑр! тесе кӑшкӑра пуҫларӗ, тет. Ҫынсем ҫупса пыҫӗҫ тет те, кашкӑрӗ ҫук та тет. Ҫапла ку пӗрре улталарӗ тет, тепӗре те улталарӗ тет. Хай аҫа ҫынсене ҫӑн ҫӑнах кӑшкӑра пуҫларӗ тет. Каллах суйеҫтерет пулӗ тесе, кун патне ҫынсем пӗри те пыраканҫук тет. Никам ҫуккине кура кашкӑр аҫанӑн пӗтӗм кӗтӳне пӑва, пӑва тухрӗ тет.

— Пӗрре улталӑн, иккӗ те улталӑн, виҫҫӗмӗшӗнҫе макӑрӑн, теҫҫӗ ваттисем,—ҫав ӗнтӗ вӑл.

## Суккӑрпа хӑлхасӑр.

Суккӑрпа хӑлхасӑр йут хире пӑрҫа варлама кайнӑ. Хӑлхасӑри суккӑрине калать: есӗ итле те, мӗн илтнине мана кала; епӗ астуса тӑрӑп та, мӗн курнине сана каласа парӑп, тет.

Ҫапла вара суккӑрпа хӑлхасӑр ана ҫине ҫитсе, пӑрҫа ӑшне кӗрсе ларнӑ. Суккӑри пӑрҫа хӑмӑлӗсене хыпаласа пахать те ай-хай хутаҫлӑ тет.

— Ӑҫта хуралҫӑ? тесе ыйтрӗ тет хӑлхасӑрри. Унҫен те пулмасть, суккӑри йаран ҫине такӑнса та ӳкет.—Мӗн пулҫӗ? тесе ыйтрӗ тет хӑлхасӑри.—Куран пулӗ, терӗ тет суккӑри. Хӑлхасӑри: тарар пулӗ? терӗ тет те, тара паҫӗ тет. Суккӑри ун хыҫҫӑн ҫупрӗ тет.

## Упӑтепе пӑрҫа.

Упӑте ик ывӑҫ туллийех пӑрҫа йатса пынӑ. Кунӑн пӗр пӑрҫи тухать ӳкет. Ҫавна илнӗ хутра, ку тата ҫирӗм пӑрҫа кӑларса ӳкерет. Вӗсене пуҫтарашшӑн хӑтланса, ку мӗн пур пӑрҫине тӑкса йарать. Хайхи упӑте ҫиленсе ҫитет те, пӑрҫине ҫӑлпар! салатса, хӑй ҫупа парать.

## Пулӑ.

Ҫынӑн ура пур. Кайӑкӑн ҫунат пур. Ҫын урапа утаҫ. Кайӑк вӗҫет. Пуллӑн та ҫунатсем пур, анҫах вӑл ҫунаҫӗсемпе вӗҫмест, шывра ишет.

Ҫуркунне пулӑ вӑлҫа сапаҫ. Ҫав вӑлҫаран пулӑ ҫурисем тухаҫҫӗ. Вӗсем вӑлҫаран тухнӑ тухманах, шывра ишше хӑйсем валли апат шырама пуҫлаҫҫӗ.



### Пулӑҫпа пулӑ ҫури.

Пӗр пулӑҫӑ пулӑ ҫури тытнӑ. Пулӑ ҫури калаҫ: пулӑҫӑ, мана каллах шыва йар: куратӑн пулӗ, епӗ пӗҫӗкҫӗ, сана манран усӑ нумайах пулас ҫук. Йарсан епӗ ӳсӗп те, есӗ мана тытӑн, сана вара усӑ нумайтарах пулӗ, тет. Пулӑҫи калаҫ кӑна: нумайа хапсӑнса сахала аларан йаракан ухмах вӑл, тет.

## Ç ы р м а.

Çырма йухаť кёрлесе
Аслă йалăн çумĕпе.
Хĕвел тĕрĕ тĕрлесе
Выђаť унăн шывĕпе.
Тăрă шывăн ăшĕнђе
Кăвак пĕлĕт йавăнаť,
Ватă йăмра тайăлса
Тĕсне пăхса савăнаť.

Авă кĕпер çийĕнђе
Старик лараť вăлтапа.
Йапăрт йапăр пуллине
Улталашшăн ăманпа.
Ав ађасем çӳл йенђе
Шывра ишше çӳреççĕ,
Пулă тытан ваттине
Хирĕçтерме пĕлеççĕ.

## Ађасемпе шапасем.

Ађасем пĕве хĕрринђе выђанă. Вĕсем шыв-



ра шапасем ларнине курнă. Ађасем вĕтĕ ђул пуçтарнă та шапасене ђулпа пере пуçланă. Пĕр шапи кăшт пуçне кăларђĕ тет те, ађасене каларĕ, тет: ђарăнăр, ађасем, ан перĕр: сире вăйă та, пире вилĕм тĕрĕ, тет.

Шапа мĕнтен пулаť? Есĕр йăтă пуллине курни?

## Мулкађăсемпе шапасем.

Пĕрре мулкађăсем пĕр çĕре пухăнђĕç тет те, хăйсен пурăнăçĕ naђар, пирки куђана пуçларĕç, тет: пире çынсем те, ытти тискер кайăксем те тыта тыта çийеççĕ. Капла хăраса, асапланса пурăниђђен, пирĕн пĕрех хут вилмелле.—Аťăр шыва кайса вилер терĕç, тет. Хай мулкађăсем шыва путса вилес тесе кӳлĕ патнелле ђупса кайрĕç тет. Шапасем мулкађăсенђен хăрарĕç тет те, шыва сикрĕç тет. Пĕр мулкађĕ калаť тет, ађасем, ђарăнăрха, пирĕн халех путса вилес мар. Шапасенĕн пурăнăçĕ пирĕнђен те naђар курăнаť, вĕсем пиртен те хăраççĕ, терĕ тет.

## Шкул пахђи.

Пирĕн шкул пахђа варринђе лараť. Пахђа хĕррипе карта тăрăх тĕрлĕ йăвăççем, шалта лаштра улмаççисем ӳсеççĕ. Пĕр кĕтессинђе ђи-

йесем пур. Ун çумĕнҫе тĕмĕн, тĕмĕн хăмла çырлисем, хурлăхансем пур. Вĕсем çумĕнҫе йăрансем çинҫе çĕр çырлисем, хурăн çырлисем. ӳсеççĕ. Епĕр кăçал унта тата çиҫĕ тĕме хĕрлĕ хурлăхан, пилĕк улмаççи лартрăмăр.

## Ҫ и й е (вишни).

Ҫийе вăрманта хăй тĕллĕн те ӳсет, тата ăна пахҫана лартса та ӳстереççĕ. Çырли унăн măйăр пек, тĕсĕ хĕрлĕ, тути йӳçеклĕ калаҭ. Анҫах пахҫари ҫийе çырли шултрарах та, тутлăрах та пулаҭ.

## Х ă м л а.

Пиҫҫе çуркунне пахҫана хăмла шалçи лартса тухрĕ. Çăва тухсассăн, çав шалçа тăрăх хăмла аврисем йавăна, йавăна çӳле çитиҫҫенех улăхрĕç. Хăмлисем алса пӳрнески пек усăна, усăна тăра пуçларĕç.

## П ĕ р ҫ ĕ.



Аҫасем шкул пахҫинҫе йăрансем тунă. Унта вĕсем тĕрлĕ çимĕççем лартнă. Ӳснисене сăнама тулăпа пăрça та акнă. Çапла ĕçлене ҫух вĕсем ак мĕн курнă.

Кашни пĕрҫĕре пурăнăç тĕвви пур. Вăл типĕ пĕрҫĕ ăшĕнҫе çимесĕр, ĕçмесĕр çывăрса выртаҭ. Тăпрара пĕрҫĕ ăшăпа, тата нӳрĕпе шĕвет. Пурăнăç тĕвви вара вăранаҭ. Вăл пĕрҫĕн сĕткенне аҫа амăшĕн кăкăрне ĕмнĕ пек ĕмме тытăнаҭ. Унтан пĕрҫĕн кипкине çурса, вăл апат шырама çĕрелле тымар йараҭ. Сывлама вăл çулçине сара пуçлаҭ.

**Йумахсем:** Пĕри тăкаҭ, тепĕри ĕçет, виççĕмĕшĕ ӳсет? Алли çук—шаккаҭ, вуҫĕ çук—çунаҭ(?)

## Пахҫара.

Ҫăвăн 14-мĕш кунĕнҫе епĕр ҫĕре кăпкалатса йăран турăмăр; ҫемҫе тăпра ăшне кишĕр вăрри акрăмăр; ăна кашни каҫ шăвартăмăр. Халĕ ĕнтĕ пурăнăҫ тĕвви ҫĕрĕлсе, симĕс ҫулҫă кăларассине кĕтсех тăратпăр.

## Ҫулахи ҫăмăр.

Шăпăр, шăпăр ҫăмăр ҫăвса
Ҫĕр кăкăрне шăварать.
Йăвăҫкурăк хавасланса
Хăвăрт пĕвне парăнать.
Шывшăн ĕннĕ ҫамрăк вăрман
Лăстăртатса силленет;
Улăх тăрăх тĕплĕм ҫаран
Ҫеҫексемпе витĕнет.

Тырăпулă хăват илсе
Ҫимĕҫ кўме пикенет;
Ҫĕрĕҫлекен хĕпĕртесе
Ĕмĕт хушша киленет.
Шăпăр, шăпăр ҫăмăр ҫăвса
Тыр уйсене шўтерет:
Пур тумлам та ҫимĕҫ пулса
Пирĕн алла вăл кĕрет.

## И в а н.

Иванăн ашшĕ хирте суха тунă. Вăл ашшĕ патне ҫăкăр леҫме кайнă. Ҫара пуҫăн, ҫара



уран ҫупать ку ҫатăлтаттарса. Ашшĕ патне ҫупса ҫитет те: атте, есĕ ывăннăҫке! вĕрентха мана та суха тума! Вара епĕ те сана пулăшăп, тет. Ашшĕ кăна хирĕҫ савăнса: есĕ ҫитĕннĕҫĕре ҫынсем пĕрлешше машшинăсемпе ҫăмăллăн ĕҫлеме вĕренĕҫ. Ўлĕм кун пек суха пуҫĕпе ывăнса хăтланмĕҫ, терĕ тет.

## Тăлăхсене пулăшни.

Миттăн ашшĕ вилнĕ. Амăшĕ ҫирлĕ выртнă. Митти пĕҫĕккĕ пулнă. Ĕҫ патне ҫыпăҫайман. Ҫуллахи ĕҫ вăхăҫĕ ҫитсе тăнă. Кĕсен

уйри ĕҫ кайа йула пуҫланӑ. Кӑна кура йалти ырӑ ҫынсем пĕрлешеҫҫĕ те, кĕсене ҫеретĕн сухине туса параҫҫĕ, уттине те ҫулаҫҫĕ, тырине те вырса, кĕлтине кĕртсе параҫҫĕ. Ҫапла вара йалти ҫынсем тӑрӑшнипе Мит̆т̆асен ĕҫĕ хиртен ҫынсеннĕпе пĕрлех пуҫтарӑнса кĕнĕ.

### Ҫĕр ĕҫлемелли хатĕрсемпе машшинӑсем.



## Кӑвак ҫеҫексем.

**Кӑҫал ыраш ӑшӗнҫе тӗмшӗн кӑвак ҫеҫек пит сахал, тенӗ аҫасем. Ашшӗ каланӑ: ку кӑвак ҫеҫеке пӗтӗмпех йепле пӗтеремши? тенӗ.**

## Ҫилтӑвӑл.

Епӗр пӗрре ҫула ҫӗрем ҫинҫе вӑрлӑх ҫапатпӑр. Сисмен те хамӑр, пирӗн тӗле пӗлӗт хупланнӑ илнӗ. Ҫанталӑк сӗмтӗттӗм пулҫӗ тӑҫӗ. Унҫҫен те пулмарӗ, ҫилтӑвӑл пирӗн сарӑма, тырри мӗнӗпе, айӗн ҫийӗн ҫавӑра пуҫларӗ. Нимӗн тӑва пӗлместпӗр: хӑшӗ аллине кӗреҫе тытнӑ та, улӑмсене тӗрткелесе ҫӳрет. Хӑшӗ сенӗк илнӗ те, тырӑ хырма тытӑнса тӑраї. Пирӗнпе пӗрле авӑн ҫапан кӳршӗ лашине утланнӑ та, пирӗн тавра сиккипе кустарса ҫӳрет: тӗнҫе пӗтет! тӗнҫе пӗтет! ҫӗлӗм ӑҫташи? тет хӑй. Тӑвӑл ҫарӑнсан, хамӑртан хамӑр кулатпӑр Аптӑранӑ кӑвакал кутӑн ҫамнӑ тет; ҫавӑн пек пулҫӗ.

## Ҫулталӑк хушши.

Шурӑ йур ирӗлет
Ҫеҫен хир ҫӗрӗлет,
Йешӗл курӑк ӳсет...
Вӑл хӑҫан пулаїши?
Хӗвел хытӑ хӗртет,
Ӑшӑ ҫил вӗркелет,
Сар ыраш ҫитӗнет...
Вӑл хӑҫан пулаїши?

Хир илемӗ кайаї,
Сӗм вӑрман ҫаралаї,
Пӗр май ҫӑмӑр ҫӑваї...
Вӑл хӑҫан пулаїши?
Хирсенҫе йур анҫах,
Ҫырмара пӑр анҫах,
Сивӗтет аванах...
Вӑл хӑҫан пулаїши?

## Маруҫпа Наҫтук хӑйсем ҫулталӑк хушшинҫи ӗҫӗпе сӑнавне ак ҫапла ҫырса пынӑ.

1) **Авӑн уйӑхӗнҫе** епӗр кӑмпа татрӑмӑр. Кайӑксене ӑшӑ йенне ӑсатрӑмӑр. Пӳрт таврашне ҫӗтӗкҫурӑкпа питӗртӗмӗр. Унтан шкула кайма тытӑнтӑмӑр.

2) **Йупа уйӑхӗнҫе** купӑста тӳрӗмӗр, выҫӑхҫӗрлӗхе картапа хупса апат пама пуҫларӑмӑр.

3) **Ҫӳк уйӑхӗнҫе** куҫккисем, ҫунашкасем йусарӑмӑр.

4) **Раштав уйӑхӗнҫе** йурпа выҫарӑмӑр. Ту айӑккинҫен йарӑнтӑмӑр. Вӑрмантан ҫӑрӑш касса килтӗмӗр те, пӳрт варрине лартса савӑнтӑмӑр.

5) **Кӑрлаҫӑ уйӑхӗнҫе** сивӗ пулҫӗ. Атте вӑрмантан вутӑ турттарҫӗ. Ҫасҫасах вӑл Шупашкара ерттелпе хатӗрленӗ ҫӑптапа ҫӑпата леҫме кайкаларӗ.

6) **Нарӑс уйӑхӗнҫе** ҫӑварнире икерҫӗ ҫирӗмӗр. Атте кӳршӗсемпе пӗрлешше ҫӑмӑлтарахӑн ӗҫлеме, Шупашкара плукпа тимӗр сӳре илме кайрӗ.

7) **Пушӑ уйӑхӗнҫе** епӗр хӗвел ӑшшинҫе выҫама тытӑнтӑмӑр. Хура кураксем ӑшӑ йӗнҫен вӗҫҫе килҫӗҫ. Шӑнкӑрҫасем йӑвисене хатӗрле пуҫларӗҫ. Хӗрарӑмсем пиравӑр ӗҫне тытӑнҫӗҫ.

8) **Ака уйӑхӗнҫе** йур васкаса ирӗле пуҫларӗ. Путӑксемпе, варсемпе шыв кӗрлет. Ӑшӑ йенҫи кайӑксем, вӗҫҫе килҫӗҫ.

9) **Ҫу уйӑхӗнҫе** ҫӗкеҫҫем вӗҫҫе килҫӗҫ те, тӑмран йӑва ҫавӑрма пуҫларӗҫ. Выҫахҫӗрлӗхе курӑк ҫине кӑларҫӗҫ. Хуркӑвакалсем, ҫӑхсем ҫӗпписене кӑларҫӗҫ. Арҫынсем хирсенҫе ҫуртыри акрӗҫ. Хӗрарӑмсем купӑсга, хӑйар лартса шӑварма пуҫларӑмӑр.

10) **Ҫӗртме уйӑхӗнҫе** ҫум ҫумларӑмӑр, ҫӗр улми купаларӑмӑр.

11) **Утӑ уйӑхӗнҫе** вӑрманта ҫырла татрӑмӑр, тата хӑйарпа ҫарӑк ҫиме пуҫларӑмӑр. Мӑн ҫынсем утӑ пуҫтарҫӗҫ.

12) **Ҫурла уйӑхӗнҫе** тырӑ выртӑмӑр. Пахҫара пан улми татрӑмӑр.

**Йумахсем**: Вуникӗ ӑмӑрт кӑйӑк, аллӑ икӗ ҫавка, виҫҫӗр утмӑл пилӗк шӑнкӑрҫа пӗр ҫӑмарта тунӑ?

## Хӗрлӗ йалав.

Хура тӗтре сирӗлҫӗ,
Кун ҫуттине парӑнҫӗ;
Ӗмпӳ йӑхӗ ипӗлҫӗ,
Кунҫул ҫитрӗ, ҫӗр ҫӑтрӗ
Хӗрлӗ йалав ҫӗр ҫинҫе
Вӗл вӗл туса вӗлкӗшет,
Ҫӗрӗк тӗнҫе вырӑнне
Ҫӗнӗ тӗнҫе ҫитӗнет.

Ҫӗнӗ тӗнҫе ӳсейтӗр,
Ҫӗрӗк каска кисрентӗр...
Текех епӗр ҫура мар,
Йалав пирӗн, хыт тытар,
Хӗрлӗ йалав ҫӗр ҫинҫе
Вӗл вӗл туса вӗлкӗшет,
Ҫӗрӗк тӗнҫе вырӑнне
Ҫӗнӗ тӗнҫӗ ҫитӗнет.



# Алфавит.

А а У у Ы ы Ӑ ӑ (Ъ ъ) Е е Ӳ ӳ

И и Ĕ ĕ (Ь ь) К к Х х П п Т т

Т̆ т̆ Ҭ ҭ (Ч ч) Ш ш С с Ç ç Л л

Љ љ М м Н н Р р В в Й й Ф ф

О о

Ҭ и ф ӑ р с е м:

| | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 | 8 | 9 | 10 |
| I | II | III | IV | V | VI | VII | VIII | IX | X |
| 10 | 20 | 30 | 40 | 50 | 60 | 70 | 80 | 90 | 100 |
| X | XX | XXX | XL | L | LX | LXX | LXXX | XC | C |

# ОБ'ЯВЛЕНИЕ.

В складе Чувашского Издательства на чувашском языке имеются следующие книги:

1. А. М. Михайлов. Сайра Майаксем (Политтикка пукварĕ).
2. Р. Ç. К. Л. С. Историйĕ.
3. П. И. Иванов. Руководство к ведению первоначальных уроков русского языка в чувашских начальных школах.
4. Йалти шкулсенҫе малтанхи çул вĕренмелли Сатаҫ Кĕнеки.
5. Йалти шкулсенҫе икĕмĕш çулта вĕренмелли Сатаҫ Кĕнеки.
6. Йалти шкулсенҫе виçĕмĕш çулта вĕренмелли Сатаҫ Кĕнеки.
7. А. Йевçихнейĕв. Çĕр котексин никĕсĕсем.
8. В. Лункевĕҫ. Аслатипе Çиçĕм.
9. РФСК Респупликки Çĕр котекси.
10. К. Йакотовски. Етем ўтпĕвĕ, малтанхи шкулра вĕренмелли кĕнеке.
11. Йуман. Ахтономлă Ҫăваш Оплаçĕ (Родиноведение).
12. Е. Д. Тимофеева. Çулпуçĕ (Букварь) (2-мĕш хут çапнă).
13. Костычев. Тырапулла уйарпа пĕтерезрен йепле сыхламалла.
14. А. Т. Быков. Краткий словарь общеупотребительных русских и чувашских слов.
15. К. Фламмарион. Астрономи кĕнеки, (75 рисунăклă).
16. Ф. Т. Тимофеев. Ҫăваш ҫĕлхийĕн Крамматтикĕ.
17. Ф. П. Павлов. «Сăрнай» Хитрелетнĕ ҫăваш йуррисем.
18. Йавăçкурăк, ăна пăхса ўстересси.
19. РÇЛКС уставĕ (ҫăвашла тухнă).
20. М. А. Дернов. Утарăн тĕп ĕçĕсем.
21. Л. М. Кахановиҫ. Р. К. (польшевиксен) партти мĕнле йĕркеленсе тăраҫ? Партти уставĕ çинҫен.
22. А. Богданов. Политтикăллă економи.

Печатаются на чувашском языке:

1. 1925-мĕш çулхи Ҫăваш Кăлентарĕ.
2. Общая география.
3. География СССР.

С требваниями обращаться по адресу:

г. Чебоксары Ч. А. О, ЧУВАШИЗДАТ

Оптовым покупателям делается скидк